Т 19

ВАЛЕНТИНА
ИГНАТЬЕВА

# Хура хăлха

34969-чув



Национальная библиотека ЧР
4-034969

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

кф

К С(Чув)
Т19

Валентина Игнатьева

# Хура хӑлха

Калавсем

Владимир Агеев
илемлетнӗ



Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1994

К 84.89(=Чув) 6-445я444.3
84(2РОС=Чув)6-445я444.3

ББК 84 Чув 7—4
И 26

13 СЕН 2017
ПРОВЕРЕНО 20 10

34969-чув.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

**Игнатьева В. Н.**
И 26 Хура хăлха. Ҫалавсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. — 32 с.

**ББК 84 Чув 7—4**

**И $\frac{4803710201-53}{М\ 136(03)-94}$ 59—94**

ISBN 5-7670-0778-0

**© Чăваш кĕнеке издательстви, 1994 ç.**



## ХУРАҪКА — ХУРА ХӐЛХА

Сашукпа пӗрле ача садне ҫӳрекен арҫын ачасем пурте тенӗ пекех уйрӑм ҫуртсенче пурӑнаҫҫӗ. Вӗсене мӗскер?! Вӗсен нимӗнле хуйхӑ та ҫук. Темиҫе йытӑ ҫури илсе килсен те никам та вӑрҫмасть. Ҫирлӗ пулчӗ-тӗк — йытӑ ҫури усра, тата кирлӗрех-тӗк — пысӑккине, сунара ҫӳремеллине, илсе кил, Ҫатя Пеговӑнни пеккине. Пӳртре пурӑнакан йытӑ илсен те юрать. Петрова Ленӑнни пеккине. Питӗ те илемлӗ, ҫемҫе ҫав йыттӑн ҫӑмӗ. Шап-шурӑ тата кӑтраланса тӑрать. Мӗнле ӑслӑскер хӑй!

Сашук питӗ хурланать. Вӑл тахҫанах йытӑ

çури илесшĕн. Ятне те тупса хатĕрленĕ — Хураçка. Анчах та Сашук икĕ хутлă, нумай хваттерлĕ çуртра пурăнать. Çак çуртри çынсем йытă çури илсе килнĕшĕн ачасене питĕ çиллеheççĕ.

— Пĕр канăçлăх та çук çав йытăсенчен,— тарăхаççĕ вĕсем.

Тата тĕрлĕрен ерекен чир-чĕр илсе килесрен те хăраççĕ йытăсенчен. Мĕнле чир илсе килме пултартăр-ха пĕчĕк, илемлĕ йытă çури? Çук çав. Мĕн каласси: ăнланмаççĕ аслисем.

— Сисместĕр те, пысăк йытă пулса тăрать,— теççĕ.

Мĕнех вара. Унпа сунара çӳреме пулать-çке. Вăл кил-çурта та аван сыхлать. Нимĕнле çăра та кирлĕ мар ун чухне. Çăра уççине çухатасран та хăрамалла мар. Сашук уççине çухатать те урамра темĕнччен пиччĕшне кĕтсе тăрать. Лешĕ таврăнма васкамасть. Пĕчченех мечĕкпе вылять. Ашшĕпе амăшĕ çăра улăштара-улăштара ыванчĕç ĕнтĕ. Тĕрĕс мар тăваççĕ çав аслисем. Çуртра йытă питĕ кирлĕ.

Шухăшларĕ-шухăшларĕ те Сашук пиччĕшĕпе йытă çури илсе килме калаçса татăлчĕ.

Кӳршĕ урамра пурăнакан пĕр çынсен йытти çăвăрланă ĕнер. Пилĕк çура туса панă. Сашук курса килчĕ ĕнтĕ çав çурасене. Питĕ килĕшрĕç ачана вĕсем. Ачашшăн нăйкăша-нăйкăша амă-

шĕн кăкăрне ĕмеççĕ пĕчĕкскерсем. Пĕрне Сашука пама пулчĕ хуçи. Суйласа илме те чармарĕ. Сашук шурă çурана суйласа илчĕ. Çурин пĕр хăлхи шурă, тепĕр хăлхи — хура.

— Шурă Бим — Хура хăлха!— кулса ячĕ пиччĕшĕ.— Çакăн пек ят паратпăр эпир ăна.

— Çук! Ун пек ят памастпăр. Хураçка ятлă пултăр вăл.

— Пултăрах, ара! Шурă Хураçка — Хура хăлха,— кулать лешĕ.

Икĕ эрне иртсен ачасем йытă çурине илсе те килчĕç. Питĕ те шел пулчĕ вĕсене пĕчĕкскере амăшĕнчен уйăрма. Анчах та ачасем йытă çурине кам та пулин илсе каясран хăрарĕç.

Вĕсем ăна çурт айĕнчи путвалри пĕр кĕтесе хупрĕç. Кунта çура валли вырăн хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ. Сашук килне чупса кайрĕ те сĕт çĕклесе килчĕ, пĕчĕк тирĕк çине ярса çура умне лартрĕ. Хураçка нимĕн те çиесшĕн мар. Сĕт еннелле пăхмасть те. Сашукăн куçĕсенчен куççуль тумламĕсем шăпăртатсах юхса анчĕç.

— Амăшĕ патне каясшăн ĕнтĕ вăл.

— Çиесси килсен хăех пырса çийĕ-ха,— терĕ пиччĕшĕ пысăк çын пек.

— Выçă вилмĕ-ши вара вăл?— вараланнă аллисемпе куçĕсене шăлать Сашук.

Йытă çури çинчен кÿршĕ хĕрачи Ленăсăр пуçне урăх никам та пĕлмест-ха. Çак вĕчĕр-

хенчĕк, çиллес хĕрача темиçе хутчен чупа-чупа анчĕ ĕнтĕ путвала. Хăрах ури çинче сиккелесе ачасене витлерĕ:

— Ҫалатăп! Веçех каласа паратăп çынсене! Ҫун пек çуртра йытăсем тытма юрамасть.

— Ҫала, ара! Ҫала! Ҫутăн качака! Сан çӳçӳ вăрăм — ăсу кĕске!— пĕчĕк чышкисене чăмăртаса хĕрача патнелле пычĕ Сашук. Лена самантрах путвалтан тухса сирпĕнчĕ. Вăл чĕлхине кăларса виртлерĕ те çурăк шăнкăрав пек сассипе кăшкăрчĕ:

— Ҫăларса ывăтаççĕ акă çурăра! Пурпĕрех кăларса ывăтаççĕ. Ме-ме-ме-е!

— Ме-е-е!— виртлерĕ хирĕç Сашук.— Çавăнпа сана качака тесе чĕнеççĕ те.

Ларчĕ те ача йытă çури çумне тарăн шухăша кайрĕ:

«Ăна илсе килнĕшĕн мĕн калĕç-ши мана аттепе анне?»

Часах ашшĕпе амăшĕ ĕçрен таврăнмалла. Сашук йытă çурине тепĕр хут кĕрсе тĕрĕслерĕ. Лешĕ пĕчĕккĕн сĕт ĕçме тытăннă ĕнтĕ. Ача çул çине пăхрĕ те ĕçрен таврăнакан амăшне курах кайрĕ. Амăшĕн аллинче пысăк сумка, хăй тем аса илсе ăшшăн кулкалать. Сашук чупса пырса амăшĕн аллинчи сумкăн хăрах çаккинчен тытрĕ.

Вĕсем килнелле утрĕç.

— Эй, ман пӗчӗк пепкеҫӗм! Эй, ман пӗчӗк пулӑшаканӑм!— савӑнса мухтарӗ амӑшӗ.

— Анне, анне, эпӗ сана пӗр япала ҫинчен каласан, эсӗ мана ҫилленмӗн-ши? — тӗмсӗлсе пӑхрӗ ун ҫине Сашук.

— Ан кала нимӗн те. Эпӗ ӗнтӗ веҫех пӗлетӗп,— кулчӗ амӑшӗ.

Сашук питӗ тӗлӗнсе амӑшӗ ҫине пӑхрӗ те хӑйсен хыҫӗнчен хӑрах ура ҫинче сиккелесе килекен Ленӑна курчӗ. Пурне те ӑнланчӗ вара ача.

Вӑл питӗ савӑннипе Ленӑна ҫилленнине те манса кайрӗ.

— Лена, каҫхине пирӗн пата выляма пыр! Тӗслӗ телевизор пӑхӑпӑр.

— Эсӗ вара мана ҫивӗтрен туртмӑн-и?

— Туртмасть, туртмасть,—кулчӗ Сашук амӑшӗ.— Акӑ Хураҫка ӳссе ҫитӗнӗ те пирӗн дачӑна сыхлакан пулӗ. Эпир аҫупа дача валли ҫӗр уйӑрттарса хӑвартӑмӑр.

— Мӗнле аван! Мӗнле аван!— пӗр харӑс кӑшкӑрса ячӗҫ Сашукпа Лена.—Хӑмла ҫырлине, ҫӗр ҫырлине тӑраниччченех ҫийӗпӗр вара!

— Ӗҫлӗпӗр те. Юрӗ-и?—йӑлл! кулчӗ амӑшӗ.



## ЫРĂ ÇĂМĂЛ

Сашук кантăкран такам шакканипе вăранса кайрĕ. Ăшă утиял айĕнчен тухас килменнипе кăштах выртрĕ вăл, унтан вăштах сиксе тăчĕ.

Ача хулăн чӳрече каррине туртса уçрĕ те сарă кăкăрлă кăсăяна курчĕ. Кăсăя сăмсипе кантăка таккаса кĕвĕ кăларать. Ытла та тĕлĕнмелле. Сашук ун çине пăхрĕ те йăл кулса илчĕ. Вăл пĕчĕк аллисене тăсрĕ, кайăка тытасшăн пулчĕ, анчах аллисем сивĕ кантăка кăна пырса перĕнчĕç.

«Тĕлĕнмелле! Мĕншĕн кăсăя тесе чĕннĕ-ши

ку кайăксене? «Сар кăкăр» тенĕ пулсан тĕрĕсрехчĕ»,— шухăшларĕ ача.

Чӳрече патне тепре пырса пăхнă çĕре кăсăя вĕçсе кайнăччĕ ĕнтĕ. Пӳрт умĕнчи тирек çинче хĕрлĕ панулми пек икĕ чăмăркка çакăнса тăратчĕ.

— Анне! Анне! Пăх-халĕ! Уйăпсем вĕçсе килнĕ!— савăнса кăшкăрчĕ Сашук. Хăй вара каллех шухăшларĕ: «Уйăпсене вара «улмасем» тесе чĕнмелле пулнă. Панулмисем евĕрлех курăнаççĕ-çке вĕсем».

Ирхи апата ларчĕç. Амăшĕ тĕрлĕ йышши кукăль пĕçерсе хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ. Пурте юратса çиеççĕ. Ашă сĕт сыпни техĕме татах ӳстерет иккен. Сашук анчах пĕр çăвар та хыпмасть.

— Ывăлăм, мĕншĕн çиместĕн-ха? Çĕрулмипе пĕçернĕ кукăль кăмăлна каймасть-и? Кишĕрпе пĕçернине илсе çи. Вăл тутлăрах мар-ши саншăн, ачам?

Сашук нимĕн те чĕнмест. Хăй шавах чӳречерен пăхать. Вăл сасартăк сĕтел хушшинчен сиксе тăчĕ те çапла каларĕ.

— Эпир çиетпĕр-ха. Вĕсен вара çиесси килмест-ши? Эпĕ кайăксене тăрантарма тухатăп. Атте мана ĕнер сырăш туса панăччĕ. Çавăн çине апат хурса паратăп. Вĕсем те пирĕнпе пĕр вăхăтрах апатланччăр.

— Кайран та ĕлкĕретĕн,— терĕ амăшĕ.

— Ан чар. Тухса кĕтĕр ĕнтĕ,— хирĕçлерĕ ашшĕ.

Сашук хăвăрт тăхăнчĕ те сĕтел çинчен икĕ татăк кукăль илсе тулалла васкарĕ.

Ҫайăксене апат кайса панă хыççăн кăна вăл кукăль çиме тытăнчĕ.

— Маттур, ырă кăмăллă çав пирĕн Сашук,— йăл кулчĕ амăшĕ.



## КИЛĔШӲ

Сашукăн паян вырăн çинчен тăрасси килмест. Темшĕн-çке унăн куçĕсенче куççуль тумламĕсем курăнаççĕ.

«Қаймах тивет пуль çав ĕнтĕ ача садне»,— шухăшлать вăл кăмăлсăррăн.

Сашук çывăранçи пулса выртать. Амăшĕ питçăмартинчен савса чуптунине те сисмĕш пулать. Ĕнер амăшĕ, вăл вырăн çинчен тăманнине курса, пăшăрхансах ыйтрĕ:

— Пĕчĕк ывăлăм, чирлесе каймарăн-и эсĕ?

Сашука çакă кăна кирлĕччĕ ĕнтĕ. Вăл сассине аран-аран кăларса каларĕ:

— Анне, манӑн ӑш ыратать, хӑсас килет.

— Ах, анчах! Аппендицит мар-ши ачан?!

Ашшӗ, хыпса ҫунма пуҫланӑскер, амӑшне васкатрӗ:

— Вӑхӑта ирттермелле мар! Халех врача чӗнтерес пулать.

Вӑл васка-васка телефонпа шӑнкӑравлама тытӑнчӗ.

Сашук ӗнтӗ ашшӗпе амӑшне улталанӑшӑн ӳкӗнме те пуҫланӑччӗ, анчах та пӗлтерме тӑрӑшмарӗ.

Вӑл вӑхӑт-вӑхӑт нӑйкӑша-нӑйкӑша илчӗ, ӗҫме шыв ыйтрӗ. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, алӑкран шурӑ халат тӑхӑннӑ хитре ҫамрӑк хӗрарӑм кӗчӗ. Аллинче хӑйӗн сумка, мӑйӗ ҫинче итлемелли япала. Кун пеккине Сашук ачасен поликлиникинче курнӑччӗ-ха. Тухтӑр Сашук амӑшӗ васка-васка калаҫнине тимлӗн итлерӗ те ача патне пырса ларчӗ. Малтан унӑн температурине виҫрӗ, ҫӑварне уҫтарса чӗлхине сӑнарӗ, хырӑмне пуса-пуса пӑхрӗ. Кайран амӑшӗнчен ыйтрӗ:

— Тула мӗнле ҫӳрет ачӑр? Варвитти мар-и унӑн?

«Тула мӗнле ҫӳретӗп эпӗ? Тумланса ҫӳретӗп. Анне курман чухне кӑна кӳршӗ Мишша патне ҫарамас чупкаласа каҫнӑ»,— шухӑшларӗ Саша. «Мӗскер-ши вӑл варвитти? Мӗн витеҫҫӗ-ши унпа?»

— Варвитти çук пулсан, ачăр сирĕн сывах,— йăлл! кулса шап-шурă шăлĕсене кăтартрĕ тухтăр.— Паянлăха килте пултăр, ырантан вара садика çӳреме пуçлатăр.

— Мĕнле халĕ, ывăлăм? Паян ăшу ыратмасть-и сан?— ыйтрĕ паян амăшĕ, питçăмартинчен чуптуса.

— Паян кăшт лайăххрах,— каларĕ Сашук, хăй вара ассăн сывласа ячĕ.

«Марина Ивановна мĕнле кĕтсе илĕ-ши мана?»— шухăшларĕ ача.

Марина Ивановна Сашăсен группинчи воспитательница. Сашăсен унччен воспитательници нумаях пулмасть качча тухрĕ те урăх çĕре пурăнма куçса кайрĕ. Ун вырăнне вара çĕнни, çамрăк, илемлĕ хĕр, килчĕ.

Вăл килсенех пур ачапа та паллашрĕ. Хăйĕн çепĕç, ачаш сассипе ачасен хушамачĕсене, ячĕсене ыйта-ыйта пĕлчĕ. Сашук патне черет çитсен, вăл ачан тараватлă мар сассине илтрĕ:

— Эпĕ — Сашук Петров! Эпĕ Галина Семеновнăна нихăçан та манмастăп.

— Маттур ача эсĕ. Манмалла мар çав Галина Семеновнăна. Эпир те сирĕнпе лайăхах туслашăпăр. Çапла-и, Сашук?

Вăл Сашук патне пычĕ те ăна пуçĕнчен çупăрларĕ, ăшшăн кулчĕ. Анчах та час хăнăхса çитеймерĕ ăна Сашук.

Марина Ивановна яланах савăнăçлă, çĕнĕ юрăсем юрлама, çĕнĕ вăййăсем выляма вĕрентет. Сашукăн пурпĕрех Галина Семеновнăна каялла тавăрас килет. Ăна пурпĕрех Марина Ивановна ачасене сахалтарах юратнă пек туйăнать.

— Анне, эсĕ мана паян группăна çитиех ăсатса ярăн-и?— ыйтрĕ Сашук амăшĕнчен.

— Ăсатăп, ăсатăп, ывăлăм. Группăнах кĕртсе ярăп,— каларĕ амăшĕ.

Вĕсем çитнĕ çĕре группăра пĕр ача та çукчĕ-ха. Марина Ивановна Сашука пит таркат кĕтсе илчĕ, хăех салтăнтарма пуçларĕ. Салтăнтарчĕ те çавăнтах пӳлĕме кĕртсе ячĕ. Çав вăхăталла ытти ачасем те çитнĕччĕ ĕнтĕ. Хăй вара Сашук амăшĕ патне пычĕ те унпа темĕн çинчен пăшăлтатса калаçма пуçларĕ.

Амăшĕ кайсан, Марина Ивановна пӳлĕме чупса кĕчĕ те Сашука ыталаса илчĕ.

— Питĕ курас килчĕ ман сана!

Вара ачана маччана çитиех çĕклерĕ:

— Ух! Мĕнле пысăкланнă!

Группăри ачасем пурте воспитательница тавра пуçтарăнчĕç те аллисене тăса пуçларĕç.

— Мана та çĕклĕр!

Сашук чĕнмесĕр тăчĕ-тăчĕ те пуçне аялалла пĕксе шăппăн каларĕ:

— Эпĕ сире Галина Семеновнăна юратнă пекех хытă юрататăп.



## ЕЛҪАРА ПУЛСА ИРТНИ

Мён тери аван-ҫке кунта паян! Ача саде́нче — Ҫён ҫул уявё. Ҫам кăна килмен хăнана ачасем патне! Амăшёсем, ашшёсем, аслашшёсем, асламăшёсем...

Вăрман хăнисем мён чухлё тата! Ҫаппайчăк мулкачсем, чее тилёсем, вăрман хуҫи — упа хăйён мăн кăмăллă мăшăрёпе, ачисене те пёрле илсе килнё. Ҫашкăрёсем те вёсенчен юлман. Тытасран та хăраман-ҫке! Юр пёрчи пулса тумланнă хёрачасем лёпёшсем пек чăрăш йёри-тавра ҫаврăнаҫҫё. Кунта пёр-пёринчен никам та хăрамасть. Хăравҫă мулкач ҫурисем те паян

питĕ хăюллă, хастар. Савăнăçлă юрă юхать кунта!

Петяпа Сашук йĕкĕрешсем пулнă, пĕр пек тумланнă. Вĕсем — принцсем. Юрлаççĕ, ташлаççĕ, чунтан савăнаççĕ. Савăнмалли вăхăт вĕçленсе пынă май Хĕл Мучи парнесем валеçме тытăнчĕ. Акă черет Петя патне çитрĕ. Вăл сылтăм енчи чӳрече патĕнче тăратчĕ. Унăн йĕкĕреш хăраххи — Сашук — сулахай енчи чӳрече патĕнче вырнаçнăччĕ.

— Ме-ха, хăюллă принц! Ил-ха ман парнене! Çĕнĕ çула хупа пĕрле ырă кăмăл, таса чун кăна илсе кай, — каларĕ Хĕл Мучи Петяна.

— Тавтапуç, асатте!

Акă ĕнтĕ черет Сашук патне те çитрĕ. Пăхать Хĕл Мучи — хăй куçне хăй те ĕненмест.

— Ара, çак принц тата тепĕр парне илесшĕн-ши? Ултавçă мар-ши вăл? — тĕлĕнет Хĕл Мучи, ача çине пăхса. — Хăçан килсе тăчĕ-ха вăл кунта? Каснă-лартнă çавă! Тумĕ те çавăнах.

— Ме, ил, чее принц, иккĕмĕш парне. Ил те улталама пăрах. Ултавусене кивĕ çула хăвар. Çĕнĕ çула ырă чун, таса кăмăл анчах илсе кай.

Çапла каларĕ те Хĕл Мучи ача патĕнчен салху сăнпа пăрăнса кайрĕ.

— Хĕл Мучи! Эпĕ ултавçă мар, — терĕ Сашук ним калама аптăраса.

Воспитательница Галина Семеновна кунта

мĕн пулса иртнине часах ăнланса илчĕ. Вăл Сашука аллинчен тытрĕ те Петя патне çавăтса пычĕ. Вара вĕсене хăлхисенчен темĕн пăшăлтатса каларĕ те, лешсем çавăтăнса Хĕл Мучи патне пырса тăчĕç. Хĕл Мучи вĕсем çине пăхрĕ те икĕ аллипе пĕççисене шарт! çапрĕ:

— Те эпĕ çав тери ватăлнипе ман куç иккĕллĕ кăтартать? Те тĕлĕк ку?

— Çук, асатте! Ку тĕлĕк мар!— пĕр харăс калаçма тытăнчĕç ачасем.— Эпир иксĕмĕр те пĕр кунта, пĕр сехетре çуралнă. Пĕр пек тумлантăмăр,— васкаса ăнлантарчĕ Петя.— Эпир, асатте, йĕкĕрешсем!

— Эй, тĕнче! Эй, тĕнче! Эсир ĕнтĕ, мăнукăмсем, мана, ватăскере, каçарăр.

— Каçаратпăр! Каçаратпăр, асатте!— савăнчĕç йĕкĕрешсем.

Сашукпа Петя Хĕл Мучие икĕ енчен çавăтрĕç те ташша ячĕç. Хĕл Мучи такмаклать:

Ватă мучи ывăнчĕ,
Ывăнчĕ те такăнчĕ.
Çавăтрĕç мăнукĕсем.
Питĕ ăслă-çке вĕсем!

34969-чув.
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

2. Заказ № 1436.



## ЧĔПСЕМ

Инкубатортан илсе килнĕ чăх чĕпписем самаях пысăкланчĕç ĕнтĕ. Тислĕк купи çинче юрла-юрла хурт-кăпшанкă пуçтараççĕ. Сашукăн асламăшĕ Матĕрне кинеми чĕрçи çинчен ылтăн тулă пĕрчисене ывăçпа илсе сапать те уçă сассипе:

— Чипи-чипи-чипи!— тесе йыхăрать. Амăртмалла чупаççĕ вара чĕпсем Матĕрне кинеми патнелле.

Паян та акă асламăшĕ ирех чĕпсем валли «ăмăрту» ирттерчĕ. Питĕ килĕшет Сашука чĕпсем мĕнле çинине пăхса тăма. Вĕсен хушшинче

Саша пек ырӑ кӑмӑллисем те, кӳршӗ Мишша пек пуҫтаххисем те пур. Мӗнпур тулла хӑйсем кӑна ҫисе ярӗччӗҫ.

Чӗпсене тулӑ сапса парсассӑн, асламӑшӗ лупас хыҫне улӑм илме тухнӑ иккен те, унта ларакан чӑхха — Чӑпарккана — курах кайнӑ. Вӑл вӑрттӑн пытанса вуникӗ ҫӑмарта тунӑ иккен те халӗ чӗпсем кӑларма ларнӑ.

— Ай, чеескер! Ай, чеескер! Пӗлет вӗт эпӗ кӗркуннене хирӗҫ пусма лартманнине. Халӗ кӑларсан, хӑҫан ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ-ха вӑл чӗпсем? — ятла-ятла Чӑпарккана картишне илсе кӗчӗ асламӑшӗ. — Тата мӗншӗн чӑхха пусма лартса нушаланас? Халӗ инкубатортан мӗн чухлӗ чӗпӗ илес килет, ҫавӑн чухлӗ илме пулать.

— Ан тив Чӑпарккана! Ан тив Чӑпаркка-на! — чупса пычӗ Сашук асламӑшӗ патне. — Унӑн та хӑйӗн ачисемпе выляс килет. Инкубатор чӗп-писем Чӑпаркка ачисем мар, вӗсем инкубатор ачисем. Эсӗ те кӳршӗри Мишшана мар, мана ытларах юрататӑн. Анне те мана хытӑ юрататъ, Мишшана мар.

Асламӑшӗ итлесе тӑчӗ-тӑчӗ те йӑл кулчӗ: «Ара ҫав. Сашук, мӗнле ӑслӑ ача эсӗ. Кӑлар-тӑрах, ара, Чӑпаркка чӗпписене».

Матӗрне кинеми Чӑпарккана пусма лартнӑ ҫӗре каялла илсе кайрӗ. Сашук ҫӗнӗ хыпара тусне, Мишшана, пӗлтерме тухса вӗҫтерчӗ.



## ТУССЕМ

— Миçе каламалла сана?! Мĕншĕн каллех хĕрлĕ çутă çине кĕретĕн? — тарăхса каларĕ Сашук сарă кăтра çӳçлĕ виçĕ-тăвата çулхи ачана. — Итле авантарах, астуса юл. Урăх ăнлантарса памастăп. Вылямастăп та санпа урăх.

Сашук тăрăша-тăрăша, кăтартса парса ăнлантарать машинăсем çӳрекен çул çинчи йĕркесене. Вăл милиционерсене вырăнтан вырăна куçарса лартать. Милиционерсем паян — вылямалли икĕ упапа пĕр мулкач. Пĕчĕк ача çăварне карсах итлет. Пĕр сăмахне те манасшăн мар

вăл. Кашни ăнлантармассерен Сашук экзамен ирттерет. Анчах та Вова правилăна çаплах арпаштарать. Сашăн тӳсĕмлĕхĕ пĕтсе çитрĕ ĕнтĕ. Вăл çилленсех каларĕ:

— Йăлăхтарсах çитертĕн эсĕ мана! Пулмасть санран милиционер пуласси.

Вова хурланса йĕрсе ячĕ те, сăмсине нăшăк-нăшăк туртса, куççульне шăла-шăла алăк патнелле уттарчĕ.

Çав вăхăтрах алăк чĕриклетсе уçăлчĕ те, картишне Маюк инке, Сашăн амăшĕ, килсе кĕчĕ. Ыран май уявĕ. Маюк аппа лавккана Сашук валли шарсемпе ялавсем илме кайнăччĕ.

— Мĕн пулса иртет кунта сирĕн? Сашук, мĕншĕн эсĕ хăвăн пĕчĕк тусна кӳрентеретĕн?— кăмăлсăр сасăпа ыйтрĕ Маюк инке хăйĕн пилĕк çулхи ывăлĕнчен. Хăй Вова патне пычĕ те ăна ачашшăн çурăмĕнчен лăпкарĕ.

— Нимĕн те ăнланмасть вăл. Йăлăхтарсах çитерчĕ.

— Начар вĕрентекен эсĕ апла. Ĕçне вĕçне çитерейместен, тытăнмалла та марччĕ,— каларĕ те Маюк аппа ывăлĕ патĕнчен айккинелле пăрăнса кайрĕ.

— Анне, эсĕ ман валли шарсемпе ялавсем илтĕн-и?

Амăшĕ нимĕн те чĕнмест.

— Анне, каçар ĕнтĕ мана. Эпĕ ăна урăх

кӳрентермӗп. Вова, атя выляма,— чӗнчӗ вӑл сӑмсине нӑшӑк-нӑшӑк туртакан тусне.

Амӑшӗ пӗр шарламасӑр, асӑрханса, ҫул йӗркисене пӑсмасӑр, пӳрте кӗчӗ. Ачасем ун хыҫӗнчен тинкерсе пӑхса юлчӗҫ.

Унтан Вова Сашука ҫапла каларӗ:

— Эпӗ халӗ машина ҫулӗ урлӑ мӗнле каҫмаллине пӗлетӗп. Хӗрлӗ ҫутӑ ҫутсан — кӗтсе тӑмалла, симӗс ҫутӑ ҫутсан — ҫул урлӑ каҫма юрать.

— Тӗрӗс, маттур,— мухтарӗ ӑна Сашук.

Ҫав вӑхӑтра картишне Маюк аппа тухрӗ. Вӑл ачасене чӗнсе илчӗ те иккӗшне те виҫшер шар тата пӗрер ялав пачӗ.

— Ачасем, ҫак пӗчӗк ялавсем пысӑк ялавӑн пайӑркисем пулаҫҫӗ.

— Мӗнле ялавӑн? Шкул тӑрринче ҫакӑнса тӑраканни-и?— янравлӑ сассипе ыйтрӗ Вова.— Ӑна ҫурма та, варалама та юрамасть. Ҫапла-и?

— Пурне те пӗлетӗн-ҫке эсӗ, пӗчӗкскер.

— Манӑн тусӑм пит аван. Вӑл мана вӗрентет.

Вова Сашук ҫине ӑшӑ куҫӗпе пӑхса илчӗ:

— Эсӗ мана ыран Майӑн 1-мӗшне илсе каятӑн-и?

— Илсе каятӑп, илсе каятӑп. Майӑн 1-мӗшне мар, уява. Ҫапла-и, анне? Атя, Вова, юрӑ вӗренер.

— Пурте тухăр тумланса!— юрласа ячĕ Сашук кăшт чĕтревлĕ сассипе.

— Тухăр капăр!— хутшăнчĕ амăшĕ çĕкленӳллĕ сассипе.

— Қашниех Май уявне каятпăр!— терĕ Вова, юрă сăмахĕсене арпаштарса. Вăл пуçне каçăртрĕ, ялавĕпе шарĕсене пуçĕнчен çӳлерех çĕклерĕ, тепĕр аллипе шăлаварне туртса тӳрлетрĕ те алăк патнелле салтакла утса кайрĕ.

— Қайса асаннене калам-ха, уява хатĕрлентĕр!— пĕлтерсе хăварчĕ пĕчĕкскер Сашукпа амăшне.



## АРТИСТКА

Ленăн хăвăртрах ӳссе çитĕнесси килет. Вăл артистка пулма ĕмĕтленет.

— Пултаруллă хĕрача,— тет Лена пирки садикра музыка урокĕсем ирттерекен Марина Петровна.

Киленче те Лена юрласа анчах çӳрет.

— Эй, манăн пĕчĕк шăпчăкăм,— лăпкать асламăшĕ Ленăна çурăмĕнчен.

Ленăн Тамара Чумакова пекех паллă юрăçă пулас килет.

— Сассу илемлĕ те янравлă пултăр тесен, чĕрĕ çăмарта ĕçмелле,— терĕ ăна паян Ирина.

Ирина пĕлет пулĕ ĕнтĕ. Вăл иккĕмĕш класра вĕренет-çке-ха.

Паян канмалли кун. Ленăн ашшĕ командировкăра, амăшĕпе асламăшĕ ирех пасара тухса кайрĕç. Ленăна кичем ан пултăр тесе Иринăна чĕнсе килсе хăварчĕç.

Ленăн халех вăйлă та илемлĕ сасăллă пулас килет. Анчах та çапла тума чĕрĕ çăмарта ĕçмелле-çке-ха.

— Ах, пăтăрмах! Килте пĕр çăмарта та юлман иккен... Аптрамастпăр! Халех йăвасене тухса тĕрĕслетĕп!— ал çупса ячĕ те Лена пӳртрен вирхĕнсе чупса тухса кайрĕ.

Пилĕк минут та иртмерĕ — хĕрача темиçе çăмарта илсе килчĕ.

— Пăх-халĕ, мĕнле шултраскерсем! Самант шăнкăрав пек саслă пулăп!— савăнать Лена.

— Ыйтмасăр илнĕшĕн аннӳ ятламĕ-ши сана?

— Ятламасть! Мĕншĕн ятлатăр! Эпĕ артистка пулма хатĕрленетĕп-çке!

Ĕçсе ячĕ те Лена çăмартасене, тăрăшсах сассине «якатма» пуçларĕ:

— Мо-о-о-о! Ма-а-а! Ме-е-е! Ми-и-и-и!— тăсрĕ вăл Марина Петровна вĕрентнĕ пек.

Кăнтăрла çитнĕ çĕре амăшĕпе асламăшĕ пасартан таврăнчĕç.

— Мĕнле, пит кичем пулмарĕ-и сире?

— Çук, аннеçĕм, кичем пулмарĕ. Эпĕ артист-

ка пулма хатĕрлентĕм, Ирина кĕнеке вуларĕ,— чĕвĕлтетрĕ Лена.

Амăшĕ васкамасăр парнисене сĕтел çине кăлара-кăлара хучĕ. Кунта Ленăпа Ирина валли те парнесем пур.

— Ку — мана!— ярса илчĕ Лена вут пек хĕмленсе тăракан хĕрлĕ тĕслĕ банта.— Манăн кун пекки çук-ха. Анне, пăх-ха, артистка пекех эпĕ. Ирина, эсĕ кăваккине ил.

Амăшĕ пуçне çĕклесе Лена çине пăхрĕ те тĕлĕннипе куçне чарсах пăрахрĕ. Хĕрачин тутисем çине темĕнле сап-сарă япала хытса ларнă.

— Санăн пит-куçу мĕнпе вараланнă? Мĕнпе сĕрĕннĕ эсĕ?

Лена куçкĕски патне пырса пăхрĕ те кулса ячĕ.

— Темех мар! Эпĕ, анне, чĕрĕ çăмарта ĕçнĕччĕ. Чĕрĕ çăмарта ĕçсен, сасă илемлĕ те янăравлă пулать теççĕ. Килте çукчĕ те, йăваран пуçтарса килтĕм. Итле-ха, мĕнле илемлĕ юрлатăп эпĕ:

Сенкерленчĕ шуçăм,
Çеçкере палан...

— Артистка пекех вĕт?

— Артистка пекех-и, çук-и — калама пултараймастăп. Эсĕ пĕлетĕн ĕнтĕ, аннӳпе асаннӳрен ыйтмасăр кирлĕ мар ĕçсем тумалла мар,— каларĕ амăшĕ кăмăлсăр сассипе.



## ЯНРАВ

Мěнле аван кун паян тулта. Хěвел йăл-йăл кулать. Ашă çил лăпкăн-лăпкăн вěрет. Çил вěрнě майăн йывăççен çулçисем пăшăл-пăшăл калаçаççě. Сашукпа ашшě тата кӳршěри Петя, Сашук тантăшě, паян вăрмана кайма шутларěç.

Вăрманě инçех те мар иккен.

— Вунпилěк минут хушшинче çитрěмěр,— терě ашшě.

Вăрманта тěксěмрех. Хыр йывăçěсем те çӳллě, пěлěте çитиех кармашаççě. Çăра туратсем хушшинчен хěвелěн ылтăн пайăркисем аран-

аран сăрхăнса кĕреççĕ. Сывлăшĕ мĕнле таса!

— Петя, сывла-ха авантарах, мĕнле тутлă шăршă кĕрет кунта. Çĕнĕ çулта пирĕн килте те çакăн пекчĕ. Мĕн чухлĕ чăрăш йывăçĕ!— хавхаланса пычĕ Сашук.

— Мĕншĕн чечексем çук кунта?— ыйтрĕ Петя.

— Хырпа чăрăш вăрманĕнче чечексем сахалтарах çав,— терĕ Сашук ашшĕ.— Чечексем тепĕр вăрманта ӳсеççĕ. Тепрехинче унта кайăпăр.

Утаççĕ çапла виççĕн. Хыр йĕпписен кавир пек çемçе сийĕ урисем айĕнче лаш-лаш чĕтренсе пырать.

Ачасем пычĕç-пычĕç те пытанмалла вылямa тытăнчĕç.

— Инçе ан кайăр, астăвăр, Петя, Сашук!— кăшкăрса юлчĕ хыçалтан ашшĕ. Вĕсем самаях айккинелле кайнăччĕ.

— Сашу-у-у-к!— янăраса кайрĕ вăрманта сасă. Ача чупма чарăнчĕ, тĕлĕннипе куçĕсене чарса пăрахнă хăй. Пĕрре — пĕр енне, тепре — тепĕр енне пăхкаларĕ те ашшĕ патне чуптара пачĕ.

— Атте! Қам кăшкăрать куна? Хырсем кăшкăраççĕ-и? Атте, ăçтан пĕлеççĕ вĕсем эпĕ мĕн ятлине?

— Қу вăл ахрăм янăрать, ывăлăм.

— Мĕскер вăл ахрăм?

— Ҫу вăл кăшкăрнă сасă янăраса каялла ҫаврăнса килни.

— Мĕнле ăслă илтме, калаҫма пĕлекен ахрăм.

Вăл кăштах шухăшласа ҫӳлелле, хырсем тăрринелле пăхса тăчĕ те ал ҫупса ячĕ.

— Ыран тата килетпĕр эпир кунта. Юрĕ-и, атте? Манăн итлеме, калаҫма пĕлекен йывăҫсене татах курас килет.



## «ĂАÇАРМАСТĂП»

— Кaçармастăп! Пурпĕрех каçармастăп!— çине-çинех каларĕ Сашук.

Амăшĕ, тĕпел кукринче апат хатĕрлекенскер, пĕчĕк ывăлĕ урамран кĕнине те сисмен. Пăхрĕ те вăл Сашук çине — шалтах тĕлĕнсе кайрĕ. Тăрать ывăлĕ урай варринче, хăй пылчăк кăна, çамки çинче мăйăр пысăкăш мăкăль. Пичĕ-куçĕ те çара пылчăк. Амăшĕ васкаса сиксе тăчĕ те ахлата-ахлата Сашука салтăнтарма тытăнчĕ. Вăл ăна çăвăнтарчĕ, вырăн çине вырттарса çемçе ăшă утиялпа витрĕ. Унтан мăкăлĕ çине сивĕ шыв тултарнă грелка хучĕ.

Выртать Сашук ăшă вырăн çинче, хăй пĕрмай такама вăрçать.

— Каçармастăп! Каçармастăп!

— Кама çав тери çилленнĕ эсĕ вара, ывăлăм?—ыйтрĕ амăшĕ, сиксе тухас пек тапакан чĕрине аллипе тытса.

— Петяна! Эпĕ ăна каçармастăп!

— Каласа пар-ха мана мĕн пулса тухни çинчен. Шутлар-ха санпа кам айăплине.

Сашукпа Петя футболла вылянă иккен. Петя асăрхамасăр Сашука уринчен тапнă та, лешĕ ури çинче тытăнса юлайман. Вăл чулран такăннă та юпа çумне пырса тăрăннă. Çамки çине мăкăль сиксе тухнă. Юпапа юнашар аванах шăнман лачака пулнă иккен. Кайран çавăнта ӳкнĕ Сашук.

— Ай-яй-яй! Ĕç тупса патăр та эсир ман валли,—шухăшлăн каларĕ амăшĕ, Сашукăн пылчăкпа вараланса пĕтнĕ тумĕсем çине пăхса.—Петя кăна айăплă мар кунта.

— Кам айăплă вара? Эпĕ айăплă-и?

— Эсĕ кăна та мар. Эсир, ачасем, мансах кайнă футболла вылямалли вырăн таса, тирпейлĕ, яка пулмалли çинчен.

— Эй, ара! Çапла çав!—килĕшрĕ ача.— Анне, эпĕ кăштах ăшăнатăп та Петяна шырама каятăп. Эсĕ ăна ан вăрç. Юрĕ-и? Эпир унпа футболла вылямалли вырăна тасататпăр.

## ТУПМАЛЛИ


Хураҫка — Хура хӑлха . . . . . 3
Ырӑ кӑмӑл . . . . . . . . . 8
Ҫилӗшӳ . . . . . . . . . . . 11
Ёлкӑра пулса иртни . . . . . . 15
Чӗпсем . . . . . . . . . . . 18
Туссем . . . . . . . . . . . 20
Артистка . . . . . . . . . . 24
Янрав . . . . . . . . . . . 27
«Ҫаҫармастӑп» . . . . . . . . 30



*Для дошкольного возраста*

**Валентина Николаевна**
**ИГНАТЬЕВА**

**ХУРА ХӐЛХА**

**ЧЕРНОЕ УХО**

Рассказы

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *В. И. Агеев*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Н. П. Печникова*

ИБ 2821

Сдано в набор 12.08.94. Подписано к печати 15.12.94. Формат 60×84 1/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура Литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,86. Усл. кр.-отт. 7,9. Учетно-изд. л. 0,97. Тираж 5000 экз. Заказ 1436. Изд. № 59. Цена «С» 53.
Чувашское книжное издательство 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Министерства информации и печати Чувашской Республики, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

700=

Чăваш
кĕнеке
издательстви

